чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă
1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă
1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă



СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

127 /26533/ № | Юн кун, 2014, утă (июль), **2** | Хакĕ ирĕклĕ | WWW.hypar.ru


*Пĕтĕмлетӳ*

# Техника туянма – вун-вун килĕшӳ





cap.ru сайтăн сăн ӳкерчĕкĕсем

***ЧР Ял хуçалăх министерстви тĕрлĕ харпăрлăхлă хуçалăхсем юлашки çулсенче туяннă техника хатĕрне аграрисене çуллен Уй кунĕнче кăтартать.***

Республика кунĕнче вăл Комсомольски ялĕнче иртрĕ. Унта райадминистраци пуçлăхĕсем, АПК организацийĕсен, ХФХ ертӳçисем, 15 регионти техника, минерал удобренийĕ, вăрлăх сутакан, ӳсен-тăрана сăтăрçă-çум курăкран хӳтĕлемелли хими им-çамĕпе тивĕçтерекен предприяти представителĕсем хутшăнчĕç.

Ял хуçалăх техникин 140 хатĕрне, вăл шутра тăпрана кăпкалатмалли, тĕрлĕ культурăсен вăрлăхне акмалли-лартмалли, тыр-пул, çĕр улми, кăшман, куккурус, нумай çул çитĕнекен курăк, ытти культурăна пухса кĕртмелли комбайнсене кăтартрĕç. Министерствăра пĕлтернĕ тăрăх – хресченсем çĕнĕ техника туянма 89 млн тенкĕлĕх килĕшӳ çирĕплетнĕ. Сăмахран, «Агротехкомплектпа» «РенАвто» обществăсем тырă пухса кĕртмелли 3-шер комбайн, пĕрремĕшĕ «Versatile 305» трактор туянма палăртнă.

Ял хуçалăхĕнче тавар туса илекенсем кашни районтан тенĕ пекех Р.А.Хайртдинов ХФХ çĕрĕ çине тĕрлĕ техника хатĕрне илсе килнĕ. Ăна сутакансем те унтахчĕ, хуçалăхсем килĕшӳ тăвасса кĕтсех тăратчĕç. Тен, курава хутшăннисенчен ытларахăшĕ çывăх вăхăтра машина-техника туянма палăртман та пулĕ. Çапах та Уй кунĕнче çакнашкал курав йĕркеленине ырлас килет. Вăл кивĕ техникăпа çырлахакансене çĕннине туянмашкăн кредит илме, продукци ытларах туса илме, ăна сутса тупăш нумайрах тума хистет.

Уй кунне лайăх кăмăлпа вĕçлеме хăнасем футбол «уйне» пуçтараннă. Вăййа 6 команда хутшăннă. Пĕлтĕрхи Уй кунĕнче çĕнтернĕ Ял хуçалăх министерствин командине Сергей Павлов министр пуçтарнă. Куçса çӳрекен парнешĕн «Агротехкомплект» общество, ЧР Патшалăх технадзорĕн, Ял хуçалăх министерствине пăхăнакан тытăмсен, районсенчи АПК организацийĕсен пуçлăхĕсен пĕрлехи тата Комсомольски районĕнчи АПК организацийĕсен ертӳçисен командисем тупăшрĕç.

Футболистсем парнене çĕнсе илессишĕн пĕтĕм ăсталăхне кăтартнă. Финала министерство тата районсенчи АПК организацийĕсен пуçлăхĕсен командисем тухнă. Министерство футболисчĕсем 3:2 шутпа çĕнтерсе куçса çӳрекен парнене кăçал та хăйсен аллинчех хăварнă.

Пĕтĕмлетӳ: ял хуçалăх техники туянма килĕшӳсем тунă представительсемпе футбол вăййине юратакансем Уй кунĕ кăçал та пысăк шайра иртнипе кăмăллă юлнă. Апла тăк – «ĕçпе кану – юнашар» ăнлав тепĕр хут çирĕпленчĕ.

■ **Юрий МИХАЙЛОВ**

# Кун йĕркинче – каяшсене тирпейлесси

***ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин ĕнер Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар хулисен тата Шупашкар районĕн йăлари хытă каяшсене тирпейлекен тата утилизацилекен пĕрлехи тытăмне йĕркелес ыйтупа канашлу ирттернĕ.***

Унта строительство министрĕ Олег Марков, çут çанталăк ресурсĕсен министрĕн пĕрремĕш çумĕ Евгений Юшин, Тариф службин ертӳçи Альбина Егорова, Шупашкар тата Çĕнĕ Шупашкар администрацийĕсен пуçлăхĕсем, «Спецавтохозяйство» АУО директорĕ Юрий Малов хутшăннă. Канашлура çавăн пекех Мускаври «Каяшсемпе ĕçлесси» АХО представителĕсем, ĕнер ЧР Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерствипе муниципалитетсен каяшсене тирпейлекен пĕрлехи тытăмĕн строительстви çинчен калакан килĕшĕве алă пуснăскерсем, пулнă.

Канашлура палăртнă тăрăх – асăннă тытăма виçĕ çулта туса пĕтермелле. Мускав компанийĕн çак проекта хывакан инвестицийĕсене 750 млн тенкĕ шайĕнче хаклаççĕ. Çулталăкра 100 пин тонна каяш йышăнма пултаракан полигон, çулталăкра 150 пин тоннăран кая мар каяшсене сортлакан комплекс пулĕ. Промышленноçри тата йăлари мĕн пур каяшăн 80% таран пайне тирпейлесе сиенсĕрлетни тавралăха кӳрекен сиенлĕ витĕме палăрмаллах чакарассине, республикăра пурăнакансен йышĕн çурринчен пысăкрах пайĕн экологи хăрушсăрлăхĕпе çыхăннă ыйтусене татса парассине тивĕçтерĕ.

«Каяшсемпе ĕçлесси» АХО представителĕ Павел Бесшапов палăртнă тăрăх – çак обществăн унашкал проектсене концесси условийĕсемпе пурнăçланин опычĕ пур ĕнтĕ. Йăлари хытă каяшсене тирпейлессипе çыхăннă килĕшӳсене компани Саратов, Чул хула, Волгоград, Архангельск, Мурманск облаçĕсемпе тунă.

■ **Е.ЯКОВЛЕВ**

# Çĕннине курса таврăннă

***ЧР Ял хуçалăх министерствин инноваци пайĕн ертӳçи Владимир Васильев, Комсомольски районĕнчи "Çĕр улмине мухтав" агрофирма ĕçченĕсем Алексей Селиванов, Олег Мартышин, Марат Камальдинов, Вăрмар райадминистраци пуçлăхĕн çумĕ-ял хуçалăх пайĕн ертӳçи Дмитрий Ивановпа Иван Иванов фермер, Красноармейски районĕнчи "Таябинка" агрофирмăн тĕп агрономĕ Елена Николаева, "Байер" компанин республикăри представителĕсен, "Востокпа" "Альфа-агро" обществăсен менеджерĕсем Чул хула облаçĕнчи Городец районĕнчи Аксентис поселокĕнче иртнĕ Çĕр улми кунне хутшăннă.***

Ăна тулли мар яваплă "Аксентис" общество ирттернĕ. Унта Брянск, Вологда, Владимир, Иваново, Кострома облаçĕсенчи, ытти регионти çĕр улми çитĕнтерекен хуçалăхсен ертӳçисемпе агрономĕсем – пурĕ 200 çын ытла – пуçтараннă.

Предприяти малтан çум курăк ашкăрнă уйри 3 пин гектар çĕре харпăрлăха илнĕ. "Байер" компани ăна ял хуçалăх техники туянма, тыр-пул, çĕр улми, ытти культурăсем упрамалли складсем, йĕтем, машина-техника паркĕ, администраци çурчĕ, ытти объект тума, çунтармалли-сĕрмелли япаласем туянма пĕр миллиард тенкĕ ытла уйăрнă. Общество специалистсемпе рабочисене пысăк ĕç укçи тӳлет. Çавăнпа çынсем предприятирен пăрахса каймаççĕ. Кĕркунне 20 пин тонна çĕр улми тата 6 пин тонна тырă упрама хунă, ытларах пайне сутса пысăк тупăш илнĕ. Çуркунне çĕр улми 400 гектар /"Çĕр улмине мухтав" агрофирма Канаш, Елчĕк, Комсомольски районĕсене – 673/ лартнă. Ăна удобренипе ытлăн-çитлĕн апатлантарнăран тухăç – пысăк.

Семинара пухăннисене хамăр çĕр-шывра тата чикĕ леш енче кăларнă çĕр улми сорчĕсене, управлăх хуралтăсене, унта хывнă "иккĕмĕш çăкăра" хĕл каçарма май паракан сивĕтмĕшсене кăтартнă. Çĕр улмине çуса, полиэтилен хутаççене тултарса сутлăха ăсатаççĕ.

■ **М.ЮРЬЕВ**



**ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ**

# ХАТĔР ТĂРСАН ШАР КУРМĂПĂР

**Çу уйăхĕ типĕ те шăрăх тăчĕ пулин те малтанхи вăхăтра 6 район çеç 330 гектар çинчи лаптăксене шăварчĕ. Сăлтавĕ паллă: çанталăк çапла пуласса кĕтмен, мелиорацие хатĕрленмен. Нӳрĕкпе пахча çимĕç валли усă курчĕç. Çав вăхăтра улăх-çаран, нумай çул ӳсекен курăксем типпе лекрĕç. Ял хуçалăх пĕрлешĕвĕсем вĕсене минерал удобренипе те вăхăтра апатлантараймарĕç. Ака уйăхĕн 21-мĕшĕ тĕлне те ăна курăксем çине /ЧР Ял хуçалăх министерстви хатĕрленĕ сводка тăрăх/ 9% çеç сапнăччĕ. 6 район вара çак ĕçе вуçех хутшăнмарĕ.**

**Пĕлтĕрхи çак тапхăртипе танлаштарсан ял çыннисем утă самай сахал хатĕрлерĕç. Вăхăтра шăварнă тата удобрени те çителĕклĕ панă пулсан, паллах, кăтарту палăрмаллах ӳсетчĕ. Выльăх апачĕ пирки ыйту хускатман та пулăттăм.**

**Каярах 47 хуçалăх 85 техникăпа 1534,5 гектар çĕре шăварма тытăнчĕ. Канаш, Хĕрлĕ Чутай, Çĕмĕрле тата Пăрачкав районĕсем шăвару ĕçĕнчен çав-çавах айккинче юлчĕç. Мĕн сăлтавпа-ши? Ыйтăва уçăмлатма Канаш район администрацине çитрĕм.**

**Ун чухне хĕвелĕн хĕрӳлĕхĕ чакманччĕ-ха, янкăр тӳпере пĕлĕт таткки те палăрмастчĕ.**

**Район администрацийĕн тĕп специалисчĕ, çав вăхăтрах тĕп агрономĕ, хăй вăхăтĕнче «Канаш» колхоза ăнăçлă ертсе пырса чапа кăларнă Валерий Долгов тарăн шухăшраччĕ. Ял хуçалăх культурисен, выльăх апачĕн шăпи канăçсăрлантарать ăна.**

**Хуçалăх пуçĕнче Валерий Васильевич хăй тăнă вăхăта аса илчĕ. Шăвармалли техника пуринче те тата темиçе таранах пулнă. Кӳрсех панă ăна. Йӳнĕ тăнă та çăмăллăнах туянма пултарнă. Ятарласа пĕвесем тутарнă: хăть кунĕн-çĕрĕн шăвар. Пахча çимĕçпе çĕр улмине çеç мар, выльăх кăшманĕпе улăх-çарана та. Хуçалăхсем 140-160 гектартан кая мар çĕр улми, çавăн чухлех кăшман лартнă-акнă.**

**«Канаш» колхоз хăй çеç 200 гектар çинче выльăх кăшманĕ туса илнĕ. Тухăç 1000 центнертан кая пулман. Выльăхсем валли пĕр хуçалăх çеç 200 пин тонна сĕтеклĕ апат пухса кĕртнĕ. Республикипе темиçе миллион тонна!**

**Çĕр улмине те 30-35 çул каялла республикипе пĕр миллион тонна ытла туса илнĕ. Халĕ акă çак кăтартушăн темиçе çул тапаçланатпăр, анчах ĕмĕте пурнăçа кĕртейместпĕр. Кăçал та кĕтнĕ тухăç илесси иккĕлентерет.**

**«Çанталăк хăçантанпа сулхăн, тӳпе пĕлĕтлĕ тăрать, çумăр анчахрах темиçе те çурĕ. Апла пулсан мелиораци ыйтăвне хускатма кирлех-ши?» – тейĕ вулакан. Тĕрĕсех ĕнтĕ, вырăн-вырăн çунă çумăр шăрăха пусарчĕ, сăтăрçăсене аталанма чăрмантарчĕ. Шел те, тăпрана пур тăрăхра та пĕрешкел нӳрлентереймерĕ. Кăнтăр енчех вăл çителĕксĕр ӳкрĕ. Ытти çĕрте те çĕр çилпе типсе çитрĕ. Апла пулсан – çумăр кирлех, çанталăк ăшăтсан тем пекехчĕ. Анчах нимĕн те тăваймăн – çӳлти хуçан хăйĕн ирĕкĕ.**

**Утă уйăхĕ пирки манас марччĕ. Вăл час-часах типĕ те шăрăх килекенччĕ. Çумăр вăхăтĕнче шăварма тăхтасан та – мелиораци техникине халех сӳтме-пуçтарма васкар мар.**

**«Хатĕр тăрсан шар курмăпăр», – тенĕ ваттисем. Типпе кĕтсе илме кирек хăш уйăхра та /кăçал вăл çу уйăхĕпе пĕр килчĕ/ хатĕр пулмалла.**

**– Районта 3 хуçалăх 16 гектар çинче пахча çимĕç туса илет. Ыттисем тĕш тырă çитĕнтереççĕ. Халĕ ĕлĕкхи пек çирĕп ыйтас е хушас йĕрке çук вĕт. Мелиораци техникине туянакан сахал. Ял хуçалăх организацийĕсем тырă туса илнипех аталанасшăн, тупăш илесшĕн. Пĕлетпĕр-ха: лайăх пăхсан çĕр улми е купăста пысăк услам парать, анчах вĕсене пухса кĕртесси чĕр нуша. Халăх çитмест. Комбайн, лайăх управ кирлĕ. Ана çинченех 6-7 тенкĕпе сутнин усăлăхĕ сахал. Хĕлле «иккĕмĕш çăкăрăн» хакĕ 30 тенке çитрĕ. Патшалăх мелиораци техники туяннăшăн çуррине каçарать пулсан та ăна илме вăй çитереймеççĕ. Анчах малашне туянакансем тупăнаççех, – терĕ райадминистрацин АПК организацийĕсемпе çыхăну тытакан пай пуçлăхĕн çумĕ Валерий Никоноров.**

**Валерий Геннадьевич ялсенче пахча çимĕç пачах та çитĕнтермен çынсем пуррине те палăртрĕ. Вĕсем хулара янттине туянаççĕ. Анчах унашкалли сахал. Ытларахăшĕ хăй ӳстернине кăмăллать.**

**– Халăх шухăш-кăмăлĕ улшăнатех, килĕнче туса илнĕ çимĕçе хисеплеме тытăнатех. Шанас килет: ӳлĕмрен ял хуçалăх организацийĕсемпе хресчен /фермер/ хуçалăхĕсем çеç мар, уйрăм çынсем те ансат тата йӳнĕрех тăракан мелиораци техники туянаççех, – терĕ Валерий Никоноров.**

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ**

# Михаил Игнатьев – телеэфирта

Утă уйăхĕн 2-мĕшĕнче 12 сехетре Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Раççей общество телекуравĕн эфирĕнче «Пысăк çĕр-шыв» программăна хутшăнать.

Телекăларăма утă уйăхĕн 2-мĕшĕнче 17 сехетре тата утă уйăхĕн 3-мĕшĕнче 00 сехет те 20 минутра тепĕр хут кăтартаççĕ.

**КУН хыççăн КУН**

☎ 56-04-26

## Çамрăк инспекторсен слечĕ

***Мускавра çул-йĕрĕн çамрăк инспекторĕсен Пĕтĕм Раççейри «Хăрушсăрлăх кустăрми – 2014» конкурсĕ вĕçленнĕ. Унта тĕрлĕ регионтан 83 команда пухăннă.***

Ăмăрту «Олимп ялĕ – 80» спорт керменĕнче тата АПК ĕçченĕсен профсоюзĕн методика центрĕнче иртнĕ. Чăваш Ен чысне Вăрнар районĕнчи Аçăм Çырми шкулĕн вĕренекенĕсем (ертӳçи – аслă категориллĕ учитель Владимир Петров) хӳтĕленĕ. Йĕркелӳçĕсем шкул ачисене тĕрлĕ енĕпе тĕрĕсленĕ: ăс-хакăл конкурсĕсем, аталану вăййисем... Пирĕн команда (йышра – Данила Данилов, Денис Зиновьев тата Анастасия Семенова) «Велосипедпа çӳресси» станцире пĕрремĕш вырăн йышăннă, уйрăм тупăшура Светлана Матвеева лайăх кăтартупа палăрнă. Конкурс пĕтĕмлетĕвĕпе Чăваш Ен ачисем чи пултаруллă 10 команда йышне кĕнĕ. Республикăри çамрăк инспекторсен слетĕнче çĕнтернĕскерсем çĕр-шыв конкурсне пĕрре мар хутшăннă, пĕлтĕр те парнесемпе таврăннă.

**Е.АНДРЕЕВ.**

## Ентешсем медальсемпе таврăннă

***Чăваш Ен спорт ориентировкин хастарĕсем федерацин Атăлçи округĕн чемпионатĕнчен медальсемпе таврăннă.***

Ăмăрту Чул хула облаçĕнчи «Хĕрлĕ парăс» сиплев лагерĕнче иртнĕ. Виçĕ кунра 12-65 çулсенчи спортсменсем спринт, кросс енĕпе тата эстафетăра мала тухассишĕн тупăшнă. Чемпионатра пирĕн ентешсенчен уйрăмах ветерансене ăннă. Республикăри чи паллă ориентирçă, тĕнче чемпионĕ Николай Павлов 50 çултан аслăраххисен ушкăнĕнче кроссменсен тата спринтерсен турнирĕсенче пьедесталăн чи çӳллĕ картлашки çине икĕ хут хăпарнă. Унăн юлташĕ Александр Степанов та тĕрлĕ ăмăртура икĕ медаль çĕнсе илнĕ. Чăваш патшалăх университечĕн преподавателĕ Артур Шугаев 3700 метрлă дистанцие пĕрремĕш вĕçлесе «ылтăна» тивĕçнĕ. Çамрăк спортсменсенчен Даша Любавина, Настя Боголюбова тата Настя Утина лайăх кăтартусемпе палăрнă, хĕр ачасем эстафетăра иккĕмĕш вырăн йышăннă.

**А.МИХАЙЛОВ.**

## «Тивлетĕн» юрри-кĕвви Тюменьте янăранă

***Вăрнарти культурăпа кану центрĕ çумĕнчи «Тивлет» ансамбль Тюменьте иртнĕ Акатуя хутшăннă. Чăваш юрри-ташшине кăмăллакансем унта Тюмень облаçĕнчи чăвашсен «Тăван» ассоциацийĕ чĕннипе кайнă.***

Уяв çĕртмен 28-мĕшĕнче Тура шывĕ хĕрринчи кану вырăнĕнче иртнĕ. Пухăннисене Тюмень облаçĕнчи чăвашсен чи лайăх пултарулăх ушкăнĕсем илемлĕ юрă-кĕвĕпе, хитре ташăсемпе савăнтарнă. «Тивлет» ансамбль вара аякри чăвашсене музыка композицийĕсем, сюита «парнеленĕ». Акатуй лапамĕнче чăваш наци картишне, алă ĕçĕсен куравне йĕркеленĕ. Кунтах чăваш наци апатне ас тивсе пăхма май пулнă. Праçникре пăхаттирсем кĕрешсе вăй виçнĕ. Чи-чи вăйлине, паллах, авалтан килекен йăлапа тĕреклĕ така тивĕçнĕ. Кăмăл тăвакансем кире пуканĕ йăтас, вĕрен туртас енĕпе ăмăртнă. Ача-пăча та айккинче юлман: вĕсем валли тĕрлĕ вăйă йĕркеленĕ. Тахçанччĕнех янăранă чăваш юрри уçланкăра, Тура шывĕ тăрăх саланса ытти наци çыннисене те савăнтарнă.

**Р.АНАТОЛЬЕВА.**

## Вăрманлă тăрăхра – çыравçă мăнукĕсем

***Йĕпреç районĕнчи Ирçе Çармăс ялне Иван Антонов çыравçă мăнукĕсем Наталья тата Сергей Артемовсем çитсе курнă.***

Ирçе писателĕ, журналисчĕ Иван Захарович Антонов 1919 çулта Патăрьел районĕнчи Шăхачра çуралнă. 1929 çулта амăшĕпе Ирçе Çармăса пурăнма куçнă. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи çулĕсенче стрелоксен 141-мĕш дивизийĕнче çапăçнă, «Родина зовет» хаçат редакцийĕнче яваплă секретарьте ĕçленĕ. Унăн «Сержант Алексей Иконников», «Автоматчик всегда побеждает» – вăрçă çулĕсенче çырнă чи лайăх хайлавĕсем. Вăрçă хыççăн «В семье единой» романĕпе палăрнă. Çав вăхăтрах вăл драматург та («Была такая девушка», «Добрая дорога» пьесăсем), критик та (ирçе литературинчи вăрçă темине çутатнине тата çĕнĕ ятсене тишкерсе çырнă статьясем) пулнă. Иван Захарович ирçелле те, вырăсла та лайăх çырнă. Çыравçăн хĕрĕн Лидия Ивановнăн ачисем Ирçе Çармăсри вулавăшпа, асăннă ялти пĕлӳ çуртĕнчи М.Е.Евсевьев ячĕллĕ шкул музейĕпе паллашнă.

**А.ГРОМОВА.**

**Çанталăк çинчен**

Паян пĕлĕтлĕрех çанталăк пулать. Çил кăнтăр-хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 2 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 28, çĕрле 17 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 754 мм, сывлăшри нӳрĕк 48 процент.

**Кун тăршшĕ 17 сехет те 32 минут.**

Ыран уяр çанталăк пулать. Çил кăнтăр-хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 4 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 26, çĕрле 17 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 751 мм, сывлăшри нӳрĕк 49 процент.

**Кун тăршшĕ 17 сехет те 30 минут.**

*Кооперáци*

# Килти хуçалăхшăн – пысăк пулăшу

***Валентина Белкова ветврач бройлер чăх чăпар е шурă чăхран мĕнпе уйрăлса тăни, ĕне маститпа ан чирлетĕр тесен мĕн тăвасси, амаран уйăрнă çăвăрсене еплерех çитĕнтересси çинчен нумай каласа пама пултарать. Йĕпреç райповĕн аптекин заведующийĕнче тăрăшаканскер теорие çеç мар, практикăна та лайăх пĕлет.***




– Эпир килти хуçалăхра мĕнле выльăх усраманни юлнă-ши? – тет вăл. – Ĕне, пушмак пăру, цигай ăрачĕллĕ сурăх, качака, кролик /90 таран/, бройлер чăх, ытти выльăх тытнă. Халĕ те йышлă. Ир-каç, ĕçе кайиччен, тунсăхламастпăр. Ялта килти хуçалăхсăр пурăнма пĕлместпĕр. Вăл пĕрмай чуптарать. Картиш тулли выльăх çине пăхатăн та – савăнатăн.

Юлашки çулсенче Валентина выльăх-чĕрлĕх валли препарат сутнипе пĕрлех ял çыннисене чăх чĕппи туянма пулăшать. Ку ыйтупа тӳрех ун патне пыраççĕ. Ветврач ăна ăçта, мĕнле татса памаллине лайăх пĕлет. Сывă чĕппе, паха апатпа тивĕçтерет.

Чылайăшĕ пуслăх туянасчĕ тесе унтан пуш уйăхĕн пуçламăшĕнчех пулăшу ыйтать. Саккас панă çынна кайăк-кĕшĕк фабрикинчен 2-3 сехетрех кӳреççĕ. Хăвăртлăх Валентинăн ĕç йĕркине кĕрсе вырнаçнă ĕнтĕ. Чĕпсене района читлĕхре е ешчĕкре илсе килеççĕ. Пĕчĕкскерсем хăйсене вĕсенче лайăх туяççĕ.

Анчах хăшĕ-пĕрин пӳртре е витере ăшă пулманран, кантăкран е алăкран сивĕ сывлăш кĕнĕрен, вăхăтра шыв ĕçтерменрен, тулăх апат çитерменрен тĕрлĕ чир аталанать. «Начар пăхакансенчен туянмалла мар», – тет В.Белкова. Ăçтан туянмаллине хăйĕн саккасçисенчен пытармасть.

– Калăпăр, эпĕ паян пĕр машина чĕп фабрикăран тиесе килетĕп, – ăнлантарать заведующи. – Çул çинче тĕрĕслевçĕсем чарсан чĕпсене вакцинациленине çирĕплетекен справка кăтартмалла. Вăл саккасçăсем туянакан чĕпсен сывлăхне çирĕплетет. Тин çеç киле илсе килнисене çитĕннисем патне ямалла мар. Пĕр эрнелĕхе те пулин уйăрса карантина хупса пăхмалла. Пĕрремĕш кунсенчех йăмшаклансан вĕсене пасар сутуçисем мухтакан антибиотик пама ан васкăр. Пулăшмасан – сиплекен эмел кайран суйласа илме йывăр. Çитĕнтернĕ чух ман пата тĕрлĕ ыйтупа кĕреççĕ. Пурне те хурав пама тăрăшатăп. Тепĕр чухне вăл е ку кил умĕнчен иртетĕп те алăкран картишре çитĕннĕ чăхсем чупнине асăрхатăп. Ман патран илсе кайнăскерсем сывă та çирĕп.

Килти хуçалăхра ытларах чăх-чĕп ӳстерме тăрăшнине майракаллă шултра выльăха пăхма йывăртараххипе, кайăк-кĕшĕке пăхма çăмăлраххипе ăнлантармалла. Унăн сертификациленĕ хутăш апатне /вăл лайăх çитĕнме, ăратлăха лайăхлатма пулăшать/ райпоранах туянма пулать.

– Чĕп тĕсне тата вăл миçе уйăхрине пăхса «Солнышко», «Рябушка», «Бройлер» ятарлă хутăш апат туянма сĕнетĕп, – сăмахне тăсать ветврач. – Вĕсенче чĕпсене кирлĕ аминокислота, витаминсем, минерал пур. Çак апата çитерсен чĕпсем хăвăрт çитĕннине пĕлекенскерсем сутлăха çĕннине тата мĕн кӳнипе кăсăкланса тăраççĕ.

2014 çул пуçламăшĕнчен тытăнса çак таранччен райпосем республикăра пурăнакансене çăвăр чĕп, бройлер, кăвакал, хур тата кăркка чĕппи 75 пин сутнă. Ял çыннисене вĕсемпе тивĕçтерессишĕн Элĕк, Октябрьски, Йĕпреç, Етĕрне, Калинино райповĕсемпе потребительсен «Тăвай кооперативĕ» обществи лайăхрах вăй хучĕç. Элĕк райповĕ кăна ака-çу уйăхĕсенче 8 пине яхăн кайăк-кĕшĕк чĕппи сутрĕ. Ураскилт, Кĕçĕн Тăван, Шĕвĕш ялĕсенчи лавккасем 500-700 чĕп кӳме çынсенчен саккас йышăннă. Йĕпреç райповĕ ял-йыша пурĕ – 5,5 пин, вăл шутра Хурамалсене пин чĕп туянма пулăшнă. Хăшĕ-пĕри килти хуçалăхра усрама бройлер чĕппине 100-150 илет. «Райпон шанчăклă пулаканччĕ, – теççĕ çынсем. – Вăл фабрикăран чĕпсен сывлăхĕ епле пулассине пĕлсе илсе килет». Кооператорсем кӳрекеннине çирĕп шанаççĕ.

Чăвашпотребсоюз Вăрмартан, Вăрнартан, Канашран, республикăри ытти фабрикăран, çавăн пекех Чул хула облаçĕнчен, Мари Элтан кайăк-кĕшĕк турттарса халăха сутасси тахçанах ĕç йĕркине кĕрсе çирĕпленнĕ. Вĕсенчен курттăммăн туяннăран кооператорсем республикăри вăтам хакран йӳнĕрех сутаççĕ.

Ялта пурăнакансенчен нумайăшĕ – кооперáци лавккинче тавар туянакан çеç мар, унăн пайташĕ те, райпона аш, сĕт, эмел курăкĕ пухса паракан та. Паллах, райпосем килти хуçалăхсене кайăк-кĕшĕк çитĕнтерме пулăшаççĕ. Тепĕр енчен, тырă туянакан ытларах пулсан ял хуçалăх организацийĕсене те, райпосене те лайăх. Пĕлтĕр кăна республикăра пурăнакансене кооператорсем 10 пин ытла тонна фураж, хутăш апат, сăсăл сутнă. Кăçал та лавккасене чупса пырса туянаççĕ.

– Ялта пурăнакансене таварпа тивĕçтерессипе тата вĕсемшĕн пулăшу ĕçĕ пурнăçласси Чăваш Енри потребительсен кооперацийĕн тивĕçĕ, – терĕ Чăвашпотребсоюз канашĕн председателĕ, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Валерий Павлов. – Çак ĕçе 120 çул пурнăçлать ĕнтĕ. Ку хушăра кооператорсем ял территорийĕсене аталантарас, пурнăçа лайăхлатас ĕçе пысăк тӳпе хывнă. Вĕсем ял-йыша кайăк-кĕшĕк сутаççĕ, сĕт, эмел курăкĕ пухаççĕ, çынсене выльăх-чĕрлĕх усрама тырăпа, хутăш апатпа тивĕçтереççĕ.

■ **Нина АНТОНОВА.**

В.Сорокин сăн ӳкерчĕкĕ

*Ял хуçалăх ăсти*

# «Çĕре пĕтĕм чуна памалла»

***Çак каларăш Вăрмар районĕнчи Пысăк Енккассинче пурăнакан 75 çулти Станислав Калягиншăн пурнăç тĕллевне çаврăннă. Хăйĕн кун-çулне çĕр ĕçĕпе çыхăнтарнăскерĕн çапла калама ирĕк пурах. «Çĕр ĕçчен çынна юратать, унта тар тăкса вăй хурсан кăна тухăç илетĕн», – терĕ хресчен-фермер хуçалăхне 20 çул ертсе пынă хисеплĕ çын.***



### «Эпир артист йышшинчен мар»

Калягинсем Чăваш Енре пĕртен пĕр çемье пулĕ. Сайра тĕл пулакан хушамата илтсен чылайăшĕ Раççей халăх артисчĕ Александр Калягин сирĕн тăван мар-и тесе ыйтма та хăюлăх çитерет иккен. Эпĕ те хушамат пулса кайнин вăрттăнлăхĕпе кăсăклантăм. «Эпир артист йышшинчен мар, пирĕн йăх-несĕлĕмĕр авалтанпа çĕр ĕçĕпе пурăннă. Аттене, Александр Алексеева, ача чухне Алякка тесе чĕннĕ. Анчах ял шăпăрланĕсем тăрăхласа Каляка тесе кулнă пулать. Çак ятранах хушамат пулса кайнă, – калаçăва пуçларĕ Станислав Александрович. – Пирĕн çемье «Динамо» колхозра /каярах 25-мĕш партсъезд ячĕллĕ совхоз/ вăй хунă: атте – завхозччĕ, çĕр улми сутма аякри хуласене час-час çӳреме тиветчĕ унăн, анне те ĕмĕрĕпех ял хуçалăхĕнче тăрăшнă. Эпир те, 9 ачи, пĕчĕклех ĕçе кӳлĕннĕ. Эпĕ те 7 çултах кĕтӳ кĕтме пуçларăм, ӳсерехпе лаша шанса пачĕç: унпа сухалама çӳреттĕм, тавар турттараттăм. Вăтам шкул хыççăн колхозра икĕ çул ĕçлерĕм».

Çавăнпах пурнăç çулĕ Шупашкарти ял хуçалăх институчĕ еннелле выртнă. Каччă та агроном дипломне алла илсе тăван тăрăхра ĕçлеме ĕмĕтленнĕ, анчах çамрăк специалиста Ярославль облаçне ĕçлеме направлени панă. Килшĕн тунсăхланă пулин те хушнине пурнăçлама вĕреннĕскер унтах çул тытĕччĕ, анчах шăпа чун ыйтнине илтнех: ăна тăван совхозрах тĕп агроном должноçне сĕннĕ. Савăннă çамрăк çанă тавăрсах ĕçе пуçăннă. Маттур çынна «çӳлтисем» тӳрех асăрханă: часах ăна Энĕшпуçри «Авангард» совхоз директорне çирĕплетнĕ. Виçĕ çул хушшинче аран-аран аталанса пыракан хуçалăха ура çине тăратма пултарнă çамрăк ертӳçĕ. Пĕр çулхине совхоз соцăмăртусен çĕнтерӳçин ятне те çĕнсе илет. Анчах унтан кайма тивет унăн, пурнăç ăна тĕрлĕ çĕре илсе çитерет: çул-йĕр предприятийĕ, котельнăй хуçалăхĕ... Сăнав станцийĕнче куккуруспа соя ӳстерес енĕпе те тăрăшнă вăл. Çав тапхăра ăшшăн аса илчĕ Станислав Калягин: «Вăрмарпа Тăвай районĕсенче опытсем ирттереттĕмĕр. Питĕ лайăх тухăç паратчĕç вĕсем, гектартан 60-70 центнер тухатчĕ. Анчах темшĕн пăрахăçларĕç, Тутарстанра вара тахçанах куккурус çитĕнтересси вăй илнĕ. Юлашки çулсенче Чăваш Енре те тепĕр хут акма тытăнчĕç, çак пулăма ырлатăп», – терĕ вăл.

Институт дипломне алла илсе тăван тăрăха таврăнсан пулас мăшăрĕпе, Надежда Васильевнăпа, паллашса çемье çавăраççĕ çамрăксем. Тăвата ача çуратса ӳстернĕ Калягинсем. Асли Эмилия РФ патшалăх статистикин службин Чăваш Енри управленийĕнче ĕçлет, тепĕр хĕрĕ Эльвира юрист, ЧР Аслă судĕнче вăй хурать. Роберт çемйипе ялта пурăнать, чи кĕçĕнни Георгий – ашшĕ-амăшĕн тĕревĕ, хуçалăх техникисене «алла илес ĕç» ун çине тиенет.

### Районта – тăваттăмĕш

Çĕр-шывра фермерсен юхăмĕ вăй илме тытăнсан 1992 çулта Калягинсем уйрăм хуçалăх йĕркеленĕ. «Раççейре çĕнĕ самана пуçлансан колхозсемпе совхозсем йывăр лару-тăрăва кĕрсе ӳкрĕç. Ун чухне пирĕн районта виçĕ ХФХ пулнă: Кĕлкешре – Ямуков, Тупахра – Ванюков, Атайкассинче – Егоров, эпĕ – тăваттăмĕш. Анчах ун чухне çăмăлах марччĕ, çĕр пайĕ илесси аптрататчĕ. Хуçалăх йĕркелекенсене субсиди /хальхилле – грант/ уйăрса пачĕç. Унпа ял хуçалăх техники – комбайн, трактор, груз турттаракан машина – туянтăмăр. Вĕсем пурри ĕçе çăмăллатрĕ паллах. Малтанхи çулсенче 20 гектар çĕр çинче ĕçлеттĕмĕр, каярах 75 гектар таран ӳстертĕмĕр. Унта кишĕр, кăшман, çĕр улми, тыр-пул, люцерна лартса çитĕнтереттĕмĕр. Выльăх-чĕрлĕх тытаттăмăр. Ытларах çĕр улми туса илес енĕпе ĕçлеттĕмĕр, ир пулакан «Жуковский», «Голландский», «Луговской» сортсем лартаттăмăр. Пĕтĕм ĕçе çемьепе тăваттăмăр, хĕрӳ тапхăрта ял халăхĕ пулăшатчĕ. Малтанхи çулсенче тухăçĕ те пысăкчĕ, пахча çимĕçе Хусана, Челябинска сутма çӳреттĕмĕр. Юлашки çулсенче вара хуçалăха тытса пыма йывăрланчĕ, хам та çамрăк мар ĕнтĕ», – терĕ Станислав Александрович. Çавăнпа темиçе çул каялла ХФХ ĕçне пĕтернĕ. Пур пĕр алă усса ларма вăхăт çук. Паян та темиçе гектар çĕр çинче çĕр улми лартса ӳстереççĕ, выльăх-чĕрлĕх усрамалăх тыр-пулпа курăк çитĕнет. Хальхи вăхăтра ял халăхне пулăшу парас енĕпе ытларах тăрăшаççĕ: сухаламалла-и, утă-улăм турттармалла-и – чылайăшĕ Калягинсем патне васкать.

Хастар та тăрăшуллă çынна яланах асăрхаççĕ. Станислав Александровичăн та сумлă награда чылай. Вĕсенчен чи пахи те чи сумли – «Тăван çĕр-шыв умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» медаль. «Чăваш Республикин ял хуçалăхăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» ята та ахаль çын тивĕçмест. Лайăх кăтартусемпе палăрнă фермера патшалăх трактор та парнеленĕ.

■ **Андрей МИХАЙЛОВ.**

Автор сăн ӳкерчĕкĕ

*Суд залĕнчен*

# 13 çуллăха хупнă

***Республикăн Аслă сучĕ Канаш хулин 19 çулти йĕкĕтне УК 105 статйипе айăпласа 13 çуллăха çирĕп режимлă колоние ăсатма йышăннă. Çамрăк çын питех те тискер преступлени тунă.***

Ку кăçалхи ака уйăхĕн 1-мĕшĕнче каçхине Канаш хулинчи Элеватор поселокĕнче пулнă. Следстви комитечĕн вырăнти пайĕ тата суд çирĕплетнĕ тăрăх – каччă 37 çулти хĕрарăмăн хваттерне пынă. Йĕркесĕр пурăнатăн, иртнĕ каç вара çĕрĕпе манăн аннепе эрех ĕçнĕ тесе кил хуçипе – тытамак тытнипе аптăракан иккĕмĕш ушкăн инваличĕпе – хирĕçсе кайнă. Хĕрарăма çапнă, тапнă, унтан вара криминал тĕнчинче «лĕпĕш» ят панă çĕçĕпе усă курса мĕскĕне тĕрлĕ çĕртен чикнĕ. Кайран экспертиза суран-сене шутланă та – 61 хут! Юлашкинчен мăйне касса янă. Çĕççе урайне вилепе юнашар тăрăнтарнă та алăка хыттăн шалтлаттарса тухса кайнă.

Алăк сассине хĕрарăмăн ашшĕ, кӳршĕре пурăнаканскер, илтнĕ, сисчĕвленсе хĕрĕн хваттерне каçнă. Унта вара – хăрушă ӳкерчĕк...

■ **Н.КОНОВАЛОВ**

*Яваплăх*

# Бюджет укçине куç хывнă

***Комсомольски районĕн прокурорĕ «Уют» çĕвĕ çурчĕ» ОООн 51 çулти ертӳçи Александр Степанов тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçпе айăплав пĕтĕмлетĕвне çирĕплетнĕ. Следстви органĕ ăна ултавшăн айăплать.***

Верси çапларах: кăçалхи нарăсра «Уют» директорĕ Комсомольски районĕн халăха ĕçпе тивĕçтерекен центрĕпе ĕççĕр пĕр инвалид тата нумай ачаллă икĕ çын валли ĕç вырăнĕсем йĕркелемешкĕн килĕшӳсем тунă. Çакăн валли 39 пине яхăн тенкĕлĕх тăкакланнă май Степанов ĕçлев центрне 130,5 пин тенкĕлĕх оборудовани туяннине ĕнентерекен суя тавар накладнойĕсемпе чекĕсене тăратнă.

Çав хутсене тĕпе хурса халăха ĕçпе тивĕçтерекен центр тулли мар яваплă обществăна 129,5 пин тенкĕ куçарса панă. Ку – ятарлă программăпа килĕшӳллĕн республика бюджетĕнчен ĕç паракансен инвалидсем, нумай ачаллă ашшĕ-амăшĕ валли ĕç вырăнĕсем йĕркелеме яракан тăкакĕсене саплаштарма уйăракан укçа. Çапла вара, следстви шухăшĕпе, çĕвĕ çурчĕн директорĕ Чăваш Ен бюджечĕн 90,7 пине яхăн тенкине вăрланă.

Уголовлă ĕçе ШĔМĕн «Комсомольский» муниципалитет пайĕ тĕпченĕ, ăна тишкерме район судне панă ĕнтĕ.

■ **К.АНТОНОВ**

*Криминал*

# Юмах ятăм – юптартăм

***Патăрьел районĕн çынни, водитель удостоверенийĕсĕрех мотоцикл утланса çула тухнăскер, авари тунă хыççăн полицейскисене йăнăш çулпа яма тăнă.***

Патăрьел полицийĕн дежурнăй чаçĕнче ир енне телефон янăраса кайнă. Больницăран шăнкăравлаççĕ иккен, медиксем унта çул çинчи аварире суранланнă икĕ йĕкĕте илсе пыни çинчен пĕлтернĕ. ПАИн вырăнти уйрăмĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Николай Рубцов пĕлтернĕ тăрăх – çамрăк çынсем хăйсене çул çинче машина çапса хăварнă тесе çирĕплетнĕ. ДПС инспекторĕсем инкек пулнă текен вырăна васканă.

Унта вара мотоцикл кантăкĕн тата пластмасса пайĕсен ванчăкĕсене тупнă. «Эпир ĕç-пуçа тĕпчеме пикентĕмĕр те – «шар курнисем» кăтартусем панă май арпашма пуçларĕç. Унтан вара хăйсемех йышăнчĕç: чăннипе, вĕсене нимĕнле машина та çапса хăварман иккен. Вăйлă çумăра пăхмасăр çур çĕр хыçăн Хурама Тăвар ялĕн çыннисем мотоциклпа кӳршĕ яла кайнă, водитель транспорт хатĕрне «пăхăнтарайман» – çул айккине сикнĕ», – ăнлантарчĕ полици капитанĕ.

Транспорт хатĕрĕпе ӳсĕрле çӳренĕшĕн явап тытасран хăтăлас тĕллевпе водитель ДТП пулнине пытарас тĕллев тытнă, пĕлĕшĕсенчен мотоцикла гаража илсе кайса лартма ыйтнă. Хăй вара пассажирĕпе пĕрле çул çинче чарнă машинăпа район больницине кайнă. Врачсем çамрăк çыннăн хул шăмми хуçăлнине палăртнă, пассажирĕ вара чĕркуççине амантнă.

Тĕпчев çирĕплетнĕ тăрăх – 18 çулти каччăн водитель удостоверенийĕ те пулман, «Иж-Планета» мотоциклне патшалăх автоинпекцийĕнче регистрацилемен. Çийĕнчен пассажирăн ятарлă шлем та пулман.

Сиенленнĕ мотоцикла полицейскисем тепĕр кунне ирхине çамрăк çыннăн гаражĕнче тупнă. Йĕкĕтĕн халь харăсах темиçе статьяпа административлă майпа явап тытма тивет. Водитель удостоверенийĕсĕр тата ӳсĕрле транспорт хатĕрĕпе çула тухнăшăн КоАПра 15 талăк таран арестлессине те палăртнă. Тивĕçлĕ йĕркепе регистрацилемен мотоциклпа çул çӳренĕшĕн вара штраф тӳлеме тивет – 800 тенкĕ таран.

■ **Инна СУРКОВА**




# Вĕсем таврăнмарĕç...

***Нимĕç фашисчĕсем пуçарнă вăрçа Тăван çĕр-шыв ирĕклĕхне упраса хăварма Вăрмар районĕнчи Энтрияль ялĕнчен 136 çын хутшăннă. 70-шĕ фронтран таврăнман, çапăçу хирĕнче пуç хунă.***

1904-1905 çулсенче Раççейпе Япони хушшинчи вăрçăра паттăрлăх кăтартнă Фома Павлович Павлов килĕнчен тăвата ывăл тăшманпа çапăçма ăсаннă, виççĕшне тăван яла çаврăнса çитме пӳрмен. Миша Германи çĕрĕнче пуç хурать. Петĕр çеç укăлча хапхине уçать. Нумай награда кавалерĕ. Раççейпе Япони вăрçине хутшăннă Андрей Иванович Иванов унтер-офицер çемйинчи виçĕ ывăлпа кинĕ вăрçа тухса кайнă, тăваттăшĕ те çапăçусенчен чĕррĕн тухайман.

Андрей Семенович Семеновăн виçĕ ывăлĕ вăрçă вутне кĕнĕ, кĕçĕннине Петĕре кăна кĕтсе илчĕç. Каярахпа вăл уй-хир бригадирĕнче, колхоз ертӳçинче тăрăшса ĕçлерĕ. Сидор Фомич Фомин та виçĕ ывăлне вăрçа ăсатрĕ. Хăй вăл тĕнчен пĕрремĕш вăрçинче инвалида тухнă. Икĕ ывăлĕ çĕнтерӳпе таврăнчĕ. Пĕри Николай çар училищинче пулас офицерсене вĕрентнĕ, подполковник, тахçанах çĕре кĕнĕ. Терентий Иванович Ивановăн тăвата ывăлĕ вăрçа хутшăннă. Асли Кĕркури финн вăрçинчен таврăнсан тăван ялти колхоз пуçлăхĕнче ĕçленĕ. Вăталăххи Михаил Ржев хулишĕн пынă çапăçура пуç хунă. Тепĕр ывăлĕ Евгений Мускав облаçĕнче ШĔМ тытăмĕнчен тивĕçлĕ канăва тухнă. Кирилл Александрович Александров аслă лейтенант вăрçă хыççăн Эстонири националистсене тĕп тунă чухне вилмеллех аманнă.

Кузьма Николаевич Николаев килĕнчен те вăрçа виçĕ ывăл хутшăннă. Турра шĕкĕр, пурте тăван яла таврăннă. Кĕçĕнни Александр – пĕрремĕш ушкăн инваличĕ: унăн икĕ аллине те вăрçă «илсе юлнă». Тепĕр икĕ ывăлĕ, Ехимпе Ляваç, юхăннă колхоза ура çине тăратассишĕн хастар тăрăшрĕç. Шел, Ляваç, тыткăнри асап-нушана тӳссе тăван яла таврăннăскер, нумай пурăнаймарĕ, 5 çул иртсен çĕре кĕчĕ. Ун хыççăн Ехим, вăрçăра разведчик пулнăскер, операци сĕтелĕ çинче куç хупнă. Усал çак тĕслĕхсем вăрçăран сывă таврăннă çĕнтерӳçĕ-салтаксен хушшинчи пĕрремĕш çухатусем пулчĕç.

Николай Гавриловичăн виçĕ ывăлĕ те вăрçă хирĕнчен тăван яла таврăнаймарĕç. Ольга Степановна Степанова ветеран Вăрмарти санэпидемстанцире ĕçлесе çут тĕнчерен уйрăлчĕ. Мария Григорьевна Григорьева, фронтра икĕ урине те çухатнăскер, çуралнă ялĕнчи тăванĕсене курса савăнаймарĕ, инвалидсен çуртĕнче пурăнсах çĕре кĕчĕ. Лисук аппа «Марьене курмасăрах вилетĕп ĕнтĕ», – тетчĕ. Çаплах килсе тухрĕ. Ĕнерхи фронтовиксем ял хуçалăхне çĕклеме, уй-хир ĕçне тӳрех хастар кӳлĕнчĕç. Илья Егорович Егоров вăрçă инваличĕ пĕр хушă уй-хир бригадинче тăрăшрĕ. Разведчик пулнă Алексей Егорович Егоров – нумай награда кавалерĕ. Уй-хир бригадинче, платниксен бригадин ертӳçинче вăй хучĕ. Василий Александрович Александров хăмла бригадин бригадирĕ, ĕçшĕн Мускава, тĕп курава кайма тивĕçрĕ. Александр Данилович Данилов капитан колхоза ăста ертсе пычĕ. Николай Кириллович Разумова, салтак тумне хывсанах, колхоз ĕçне кӳлчĕç, ял Канашĕн депутатне суйларĕç, унтан ял Канашĕн пуçлăхĕн тилхепине шанса пачĕç. Каярахпа кладовщикре, уй-хир бригадирĕнче тăрăшрĕ...

Çĕр-шывра çĕнĕ улшăнусем пулчĕç. Пĕчĕк колхозсене пĕрлештерчĕç. Тăван яла ырă-сывă таврăннă 66 çĕнтерӳçĕ-салтакран паянхи кун Энтрияль ялĕнче никам та юлмарĕ. Нумайăшĕн ялта ачисем пурăнаççĕ. Теприсен ывăлĕ-хĕрĕ ашшĕ-амăшне асăнма Çимĕкре аякран килсе каять. Пурнăç пĕр вырăнта тăмасть çав.

■ **Александр ВИШНЕВСКИЙ.**

Вăрмар районĕ

*Курав*

# Хаваспах паллашрĕç

***"Регионсем – вĕçĕмсĕр килĕштерсе ĕçлесси" XXI куравра ЧР Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерстви те экспозици кăтартрĕ.***

Вăл "Чăваш Республики – экологин пуян культурин территорийĕ" ятпа иртрĕ. "Контур" общество керменĕнче пуçтараннисене экологи хăрушсăрлăхне тивĕçтерес, сăтăр тăваканран тăван тавралăха хӳтĕлес, экологи культурине ӳстерес тĕлĕшпе пурнăçлакан ĕç-хĕлпе паллаштартăмăр. Экспозици пуян, тĕрлĕ енлĕ. Министерство хăйне нумай енĕпе кăтартрĕ. Мĕншĕн тесен ăна пăхăнса тăракан учреждениcем пысăк ĕç тăваççĕ. Сăмахран, вĕсем "Пурăн, вăрман!", "Парксен маршĕ", "Йывăç ларт та пăхса çитĕнтер" акцисем, экологи хăрушлăхĕнчен хӳтĕленмелли уйăхлăх, субботниксем ирттерчĕç, ытти вун-вун ĕç турĕç.

Тавралăха ешĕллентерме, тирпейлеме хутшăнакан "ЭКА", "Симĕс хула" общество организацийĕсен, ЧР Сутуилӳпе промышленноç палатин çут çанталăк ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комитечĕн хастарĕсем курава паллашма пынă яшхĕрпе тĕл пулчĕç, таса шыв пурнăçра пысăк пĕлтерĕшлипе çыхăнтарса викторина ирттерчĕç. Чăваш Ен Радиологи центрĕн специалисчĕ республикăра радиаци фонне тĕрĕслени, çак ĕçе графикпа килĕшӳллĕн йĕркелени çинчен каласа пачĕ.

*Акци*

# Хăйсем – купа умĕнче

***ЧР Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерстви "Селфи каяша хирĕç" акцие пĕтĕмлетрĕ.***

"Селфи" сăмах фотоаппаратпа харпăр хăйне ӳкернине пĕлтерет. Ăна экологи хăрушлăхĕнчен хӳтĕленмелли уйăхлăхпа çыхăнтарса ирттертĕмĕр. Хăй тытăмлăх органĕсем ирĕк паман вырăнти каяш куписене тупса палăртрăмăр.

Акцие хутшăнакансен хăйсене фотоаппаратпа ăпăр-тапăр пухăннă çĕрте ӳкерсе министерствăна ярса памаллаччĕ. Ака, 18 – çу, 18-мĕшĕсенче пирĕн пата 33 çынран 121 фото килчĕ. Вĕсем 51 купа тĕлне пулнă.

Министерство ăпăр-тапăра тасаттарас ыйтупа вырăна çыру янă хыççăн 23-шне йăлари хытă каяш полигонне тиесе ăсатнă. Шупашкарти Сăкăт, Кăкшăм, Шалмас çырмисенче ăна унта та кунта асăрханă. Тĕп хула администрацийĕ кĕркунне полигона тиесе яма шантарнă.

Шупашкар, Çĕмĕрле, Çĕнĕ Шупашкар, Улатăр хулисенчен, Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри, Красноармейски, Элĕк районĕсенчен вун-вун сăн ӳкерчĕк. Авторĕсем – пенсионерсем, ĕçлекенсем, студентсем, шкул ачисем.

Министерство акцие хутшăннисене, каяш куписене тиесе янă организацисене, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене тавралăха тирпейлеме хутшăннăшăн тав тăвать. Фото ярса панисене федерацин "Сăрçи" заповедникне илсе кайса кăтартăпăр.

■ **Кира НАЗАРОВА,**
**министерство специалисчĕ**

## 2014 çулхи утă уйăхĕнче Раççей Федерацийĕн Президенчĕн Чăваш Республикинчи йышăну пӳлĕмĕнче çынсене ЙЫШĂНМАЛЛИ КУНСЕМ

| Орган ячĕ | Йышăну кунĕ | Йышăну вăхăчĕ |
|---|---|---|
| Чăваш Республикинчи Ача прависене хӳтĕлекен уполномоченнăй | утă, 7 | 15.00-17.00 |
| Чăваш Республикин Нотариус палати | утă, 11 | 15.00-17.00 |
| Чăваш Республикин патшалăх пурăнмалли çурт-йĕр инспекцийĕ | утă, 17 | 15.00-17.00 |
| Федерацин патшалăх пурлăхĕн управленийĕн агентствин Чăваш Республикинчи территорири управленийĕ | утă, 18 | 13.00-15.00 |
| Раççей Федерацийĕн Следстви комитечĕн Чăваш Республикинчи следстви управленийĕ | утă, 24 | 15.00-17.00 |
| Федерацин айăплава пурнăçлакан службин Чăваш Республикинчи управленийĕ | утă, 25 | 15.00-17.00 |
| Федерацин потребительсен прависене хӳтĕлессин тата этем ырлăхĕн сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕ | утă, 31 | 16.00-18.00 |

Граждансене çак адреспа йышăнаççĕ: Шупашкар хули, Ленинград урамĕ, 36-мĕш çурт.

Çак телефонпа шăнкăравласа малтанах çырăнмалла: /8352/ 62-22-33.



## Экологи кăларăмĕ

# Çут çанталăк

*Вăрман*

## Патшалăх пуянлăхне пушартан сыхлар

***Республикăн Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерствин тĕп тĕллевĕсенчен пĕри – вут-çулăм вăрмана хыпса илсе тăкак кăтартасран сыхласси.***

Пушартан асăрханмалли çуллахи тапхăра ирттерме министерство çирĕплетнĕ графикпа килĕшÿллĕн хатĕрлентĕмĕр. Вун пĕр вăрманлăх учрежденийĕн вут-кăварпа кĕрешмелли планне пăхса тухса çирĕплетрĕмĕр. Вăрман пушарне сÿнтерес тĕлĕшпе пурнăçламалли пĕрлехи мероприятисене РФ Вăрман хуçалăхĕн агентствипе килĕштертĕмĕр, вĕсене Чăваш Ен Пуçлăхĕ çирĕплетрĕ. Вут-çулăма çийĕнчех парăнтарас, инкек сăлтавне, вăрман фондне сăтăр кÿнисене тупса палăртас тĕллевпе федераци тата республикăн тивĕçлĕ органĕсен пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлемелли йĕркене пăхса тухрăмăр, Раççей Чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен министерствин республикăри тĕп управленийĕн, ЧР Гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕн пурлăх никĕсĕпе специалисчĕсене вут-кăварпа кĕрешме епле явăçтарассине уçăмлатрăмăр.

Вăрманта, унăн çывăхĕнчи уйра, улăх-çаранра вирт кайнине, хăрăк-харăка вут хыпнине е чăтлăх-вĕтлĕхре çулăм сарăлнине çийĕнчех асăрхаса «хĕрлĕ автанпа» кĕрешекенсене пĕлтерекенсене çÿреме 203 çул пăхса хутăмăр. Вăл 5,3 пин çухрăма тăсăлать. Пушар сÿнтерекенсен ирĕклĕ 65 дружинипе ертÿçине, унта çыраннă 367 çынна «хĕрлĕ вăкăра сăнчăрлама» вĕрентсе хатĕрленĕ. Пушар техникине ĕçлеттерме çунтармалли-сĕрмелли япала 39 тонна саппасланă. Вут хыптарас хăрушлăх пысăк кунсенче «СкайМир» авиакомпани самолечĕпе республика вăрманне пăхса çаврăнаççĕ. Унпа 539 пин тенкĕлĕх килĕшÿ турăмăр. Ăна ЧР хыснинчен уйăрĕç. Вăл самолета 30 сехет вĕçмелĕх.

Министерствăна пăхăнакан хысна учрежденийĕсем, федераципе республикăн çÿлте асăннă органĕсем вăрманлăхсенче графикпа килĕшÿллĕн вут-кăварпа кĕрешме вĕренеççĕ. Вăрман çунма пуçласан пĕр регион тепĕрне пулăшасси пирки Чăваш Ен, Мари Эл, Мордва, Тутарстан, Чул хула тата Чĕмпĕр облаçĕ килĕшÿ çирĕплетнĕ.

Пушар сÿнтермелли меслете ятарлă программăпа 380-ăн хăнăхрĕç. Ял-хулара, çул хĕррине, вăрман фончĕн çĕрне, ешĕллĕхе вут-кăвартан хÿтĕлеме çынсене чĕнсе каланă 67 пĕлтерÿ вырнаçтарнă.

Вăрманта пушар сÿнтерекенни – ЧР Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерствин «Вăрман пушарĕпе кĕрешекен служба» хысна учрежденийĕ. Сÿнтерме ăна ятарлă лицензи панă. Вăл патшалăх хушăвне пурнăçлать. Çавнашкал лицензи федерацин «Сăрçи» заповедникĕн тата «Чăваш вăрманĕ» наци паркĕн пур. Пирĕн служба́н диспетчер пункчĕ çĕрĕн-кунĕн ĕçлет.

Иртнĕ 3 çулта служба́н пурлăх никĕсне тĕреклетрĕмĕр. Ăна паянхи пурнăç ыйтакан техникăн 61 хатĕрне шанса патăмăр. Вĕсене туянма федераци бюджетĕнчен – 25 млн, республика хыснинчен 75 млн тенкĕ куçарнă. Хальхи вăхăтра служба уйрăмĕсенче ГАЗ, ЗИЛ, Урал автомобильсем çинчи цистернăсем, ЗИЛ-131 автомашинăсен шыв уçлакан станцийĕсем, вăрмана вут хыпса илнине пĕлсенех пушарпа кĕрешекенсене систерекен 21 ушкăн, кустăрмаллă 20 тата гусеницăллă 4 трактор, кирек хăш вырăнта та çÿреме пултаракан машина, пĕр бульдозер кирек хăш самантра та пушар сÿнтерме хатĕр.

Иртнĕ çулсенче министерствăпа ăна пăхăнса тăракан учрежденисем вут-çулăмран сыхланмалли тапхăра начар мар хатĕрленчĕç. Çавăнпа инкек вăрмана пысăк тăкак кÿреймерĕ. 2011 çулта – пĕр, 2012 çулта 9,08 гектар лаптăкра пушар тухрĕ: фонда тăкак кăтартаймарĕ. Пĕлтĕр те сăтăрлаймарĕ. Раççей Вăрман хуçалăхĕн агентстви Чул хулара иртнернĕ канашлура пĕлтĕр федерацин Атăлçи округĕнче икĕ регион çеç – Чăваш Енпе Тутарстан – вăрмана пушартан ăнăçлă сыхланине палăртрĕç.

Кăçал вăрмана – 7, вăл шутра министерство пăхса тăраканнине /0,86 гектар/ 3 хутчен вут хыпрĕ. Министрсен Кабинечĕн çу уйăхĕн 26-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе килĕшÿллĕн çав кунранах республикăра вăрмана вут-çулăмран сыхламалли лару-тăру туса хунă. Чăтлăх-вĕтлĕхе çынсене, транспорта кĕме, вучах чĕртме чарнă.

Министерствăн патшалăх инспекторĕсен, Шалти ĕçсен министерствин, Раççей Чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен министерствин республикăри тĕп управленийĕн, ЧР Гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕн ятарласа йĕркеленĕ ушкăнĕсем кану тата уяв кунĕсенче çын йышлă çÿрекен, çавна пула пушар тухма пултаракан вăрман хĕррисене пăхса çаврăнаççĕ. ЧР Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерствин, ăна пăхăнакан учреждени ĕçченĕсем çынсене шăрпăкпа асăрханмасăр усă курнăран, пирус тĕпне сÿнтермесĕр типĕ курăк е хăрăк турат çине пăрахнăран, вучах чĕртнĕрен, ăна сÿнтерсе хăварманран, ытти сăлтава пула пушар тухассине ăнлантараççĕ, унран сыхланма йыхăраççĕ.

Вăрман пушарĕнчен сыхланмалли йĕркене «Хыпар» хаçата вулакансене те пăхăнма чĕнсе калатăп. Вăрмана, унăн таврашĕнчи хавтана /типĕ курăка/, хăрăк-харăка вут хыпнине асăрхасанах Вăрман пушарĕпе кĕрешекен служба́на 8/8352/40-24-00 е вăрмана сыхлакансене тÿртен 8/800/100-94-00 номерсемпе шăнкăравласа пĕлтерме ыйтатăп.

■ **Иван ИСАЕВ,**
**ЧР çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министрĕ**

*Шухăш*

## Тĕллеве пĕрле пурнăçлар

***Хальхине аллă-утмăл çул каяллахипе танлаштаратăп та тăван тавралăхра чун-чĕрене савăнтаракан сăнсене сахалрах куратăп. Шăв-шав, кĕрлев, кĕмсĕр-кемсĕр нумайрах пек туйăнать. Тепĕр чух темшĕн мана çут çанталăкăн ытарайми «керменĕ» акăш-макăш завода аса илтерет.***

Çамрăк мар пулин те пĕлтĕр çул çÿреве тухрăм. Шупашкартан Дон çинчи Ростов хулине çитичченех пăрахутпа ишрĕм. Атăл шывĕ кăн-кăвак тÿпе пек мар – çăра тĕксĕм кăвак-симĕсчĕ. Тинкерсе пăхсан та витĕр курăнмасть. Эпĕ аслă юхан шывпа ĕлĕк те кăнтăра аннă. Кун пеккине пĕлмен. Халĕ лапкăшпех – шыв курăкĕ. Ăна çитĕнме Атăлта мĕн кирли пурте пур. Ара, хула-поселокран каяшран уйăрнă хура шыва йĕркеллĕ тасатмасăрах унта чăмтараççĕ.

Çулла Атăла йÿлеке хупланин тепĕр сăлтавĕ – тăршшĕпех хута янă ГЭСсем. Вĕсем шыв нумай тытаççĕ, анчах ăна тасалса тăма памаççĕ. Шăрăхра вăл ăшăнать. Шыв курăкне шăпах çавнашкалли меллĕ. Раççей Правительстви кăçал-тепĕр çул Шупашкар ГЭСне туса пĕтерессипе, шыв управĕн шайне хăпартассипе çыхăннă ыйтăва татса парассине пĕлтерчĕ. Тен, 63 метртан 68-а çĕклесе Атăла тарăнлатĕç. Анчах гидростанци проектне пурнăçа кĕртсен те шыв ГЭСсем тăвиччenхи пек кăн-кăвак пулмĕ. Эпĕ, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçиччен Шупашкарта çуралнăскер, Атăла шыва кĕме кайсан ватти-вĕтти ним шухăшламасăр алăпа шыв ĕçнине ас тăватăп. Никам та чирлемен. Халĕ тасату сооруженийĕ витĕр кăлармасăр унпа апат пĕçерме те, ĕçме те юрамасть.

Ятарласа уйăрнă тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем ирĕк памасăр усă куракан лаптăксене йăлари хытă каяш тултарнине пурте пĕлетпĕр. Чылайăшне утилизацилемен: çиелтен тăпрапа витмен, курăк акман, йывăç лартман. Çÿп-çап, çăтăр-çатăр хут таврана вĕçет. Купара этем сывлăхне хăрушлăха кĕртекен чир саракан вĕт чĕр чун ĕрчет. Ăпăр-тапăр тултарнă, усă курмалли вăхăчĕ тухнă полигонсене сиенсĕрлетме манмалла мар. Кунпа пĕрлех çĕннисене хута ярасчĕ. Вĕсене ĕçе кĕртмесен каяш айне пулатпăр.

Харпăр хăй пурăнакан урам-тăкăрлăк, ял е хула – куллен куç умĕнче. Чылай çĕрте кăнăш-канăша çырма-çатрана, çын çÿрекен çĕре е урама тухса пăрахаççĕ. Кукăле е ытти çимĕçе çисе ярсан чĕркенĕ хутне каяш пухмачне пăрахман çынсем пушшех тарăхтараççĕ. Ăна çил вĕлтĕртеттерсе вĕçтернине эсир те курнă пулĕ. Республика е хула кунĕ иртсен Шупашкарти Хĕрлĕ тÿремпе пынă чух çĕр каçа савăннă хĕр-каччă асфальт çине темиçе автомашина каяш хăварнинчен çуллен тĕлĕнетĕп. Пĕр пайне Шупашкар районĕнчи Питтукассинчи полигона тиесе яраççĕ. Вăл çывăхри уйра сапаланать. Хĕрлĕ тÿрем çумĕнчи кÿлмеке, Атăл еннелле вĕçет. Уяв хыççăн кирек ăçта та – çавнашкал ÿкерчĕк. Ку мĕне пĕлтерет-ха? Ÿссе пыракан ăрăва экологи пĕлĕвĕ парас ĕç кирлĕ пек пулса пымасть.

Хусанти аспирантурăра вĕреннĕ чух малтан Хĕрлĕ Çар офицерĕ пулнă преподаватель Германире пурăннине аса илсе каласа панине ниепле те манаймастăп. Нимĕçсем пысăк хулара çеç мар, пĕчĕк ялта пурăнаççĕ пулин те урам-тăкăрлăка, лапам-тÿреме куллен тирпейлеççĕ, кирек хăш каяша та хăйĕн вырăнне пăрахаççĕ. Хайхи преподаватель пĕррехинче тин çеç хупахран сăра ĕçсе тухнă çын аллинчи пирус тĕпне пухмача вăркăнтарнине, çил ăна асфальт çине ÿкернине асăрханă. Çывăхран иртсе пынă ватă нимĕç пирус тĕпне илсе пăрахăç вырăнне чăмтарнă.

Тăван тавралăх таса пултăр тесен тирпейлĕхшĕн кашнин тăрăшмалла. Нумаях пулмасть урамра выртакан хут курупкана хуçлатса пĕчĕклетрĕм, контейнера хутăм. Чăваш Енре çеç мар, ытти регионта та хутпа перекетлĕ усă курмаççĕ. Çав вăхăтрах Раççейре вăрман пĕчĕкленсе пырать. Предприятисем кирлĕ мар хута хаклăрах йышăнсан контейнера пăрахмĕччĕç.

Статьяра хама кулянтаракан ыйтусене хускатрăм. Вĕсене татса парасси влаç органĕсенчен те, ахаль çынсенчен те килет. Хамăр пурăнакан вырăна илемлĕрех те тасарах тăвассишĕн пĕрле тăрăшар!

■ **Людмила ТЕПЛОВА,**
**биологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ**

*Тĕс*

## Сăвăра йытă та тытаять

***Федерацин çут çанталăка уйрăмах сыхлакан «Сăрçи» учрежденийĕн директорĕн ăслăлăх енĕпе ĕçлекен çумĕ, биологи наукисен кандидачĕ Александр Димитриев çу уйăхĕнче заповедникăн Патăрьел районĕнчи сăвăрсен 24 гектар лаптăкĕнче пулнă. Вĕсем мĕнле пурăннине «Хыпар» тусĕсене паллаштарма кăмăл турĕ.***



– Унта Туçа шкулĕн вĕренекенĕсем тата географипе экономика учителĕ Леонид Карягин та пулчĕç, – терĕ Александр Вениаминович. – Сăвăрсем ĕрчекен вырăн Тутар Тимешĕпе юнашар, ялран тухсанах пуçланать. Вĕсене учрежденин çав лаптăкри инспекторĕ М.М.Рахматуллин сыхлать. Ял-йыша саккун хÿттинчи чĕр чун патне техника хатĕрĕпе, çуран кĕме, çĕре сухалама юраманнине ăнлантарать.

**– Кĕçĕн Шăнкăртам, Тутар Тимешĕн таврашне сăвăрсем ăçтан килсе тĕпленнĕ?**

– Ыйтăва хуравлама йывăр. Вĕсем кунта пурăннине пуçласа хут çине 1642 çултах çырса хăварнă. Ку хутлăхран ытти тăрăха, вăл шутра Елчĕк ене куçнă.

**– Сирĕнпе тĕл пуличчен ЧР Сунарçăсемпе пулăçсен патшалăх службин пĕтĕмлетĕвĕпе паллашрăм: Чăваш Енре 1995 çулта – 900, 2013 çулта – 796, кăçал 750 сăвăра шута илнĕ. Мĕн шухăшлатăр?**

– Çакăн чухлĕ юлман, 500-тен сахалрах та. Вăл лайăх хунанă çулсенче Патăрьелсен 18 çемьеччĕ, халĕ – 7. Раççейре кăна мар, Беларуçра та хухать. Сăлтавĕ мĕнре-ха? Совет тапхăрĕнче Тутар Тимешĕсем, çывăхри ытти ял çыннисем тата хуçалăхсем выльăх хальхинчен темиçе хут нумайрах усранă. Сăвăр апатланакан çарана кĕрсе курăка иртсех тăнă, аялтан ешĕлли çитĕннĕ. Сăвăр ăна кăмăллать. Апат пурне те çитнĕ. Çирĕм çулта кунти килти хуçалăхсен, колхозсен выльăхĕ нумай катăлнă. Вăл сăвăр йăх тăсакан хÿтлĕхе нумай сахалрах кĕрет. Курăка иртсе ĕлкĕреймест, вăл метра яхăн çĕкленет. Сăвăр хытă туналлине кăмăлламасть. Халĕ Тутар Тимешĕсем килти выльăха кĕтĕве ямаççĕ, ĕнене ялтан çывăхра вĕренлеççĕ. Сурăхсем ял таврашĕнчехчĕ. Çÿллĕ курăк сăвăрсемшĕн усса кайманнине, сăмахран, çут çанталăкăн Байкал биотытăм заповедникĕнче иртнĕ ăслăлăх конференцийĕнче сăмах каланă тĕпчевçĕсем те çирĕплетрĕç.

**– Çÿллĕ курăк сăвăра хăш енĕпе сиенлет?**

– Çак чĕр чун тăршшĕ 60 сантимер таран кăна. Çĕр айĕнчи йăвинчен тухса, хыçалти икĕ ури çине тăрса тинкерет те хăйĕн патне тилĕ е çапкаланчăк йытă çывхарнине курмасть, тăшман йăпшăнса пынине шăхăрса систереймест. Çав самантра чĕнмен «хăна» ялт! сикет те çу уйăхĕнче çут тĕнчене килнĕ çăвăра шĕвĕр шăлĕсемпе каплаттарать. Кĕскен: курăк çÿллĕрен Çĕрпÿ, Красноармейски, Етĕрне районĕсенчи сăвăрсене ĕрчеме памаççĕ. Пĕлтĕр хÿтлĕхри тĕп йăваран – 10, кăçал 20 метр таврари курăка çултартăмăр. Улшăну – куç умĕнче. Иртнĕ çул кашни çемьере 3 çураран ытла марччĕ, кăçал 5 таран.

Юр айĕнчен тухакан пĕлтĕрхи курăк нÿрĕк лайăх тытать. Ăна пула çуркунне йăвасем шалтан малараx кушăхаймаççĕ. Сăвăрсем шăтăк пуçне тăмпа питĕрсе тĕлĕреççĕ. Кĕркуннепе хĕллехи çумăр вĕсемшĕн хăрушă мар. Çуркунне йăвана уçсан пуçĕнче капланнă юр шывĕ шала юхса кĕрет. Çÿллĕ курăк хушшинче апатланнă чух сывлăмпа йĕпенет. Нÿрĕке пула çемье чирлеме пултарать.

**– Тата камсем çапла шухăшлаççĕ?**

– Сăмахран, Чĕмпĕр облаçĕнчи ăсчахсем. Унта сăвăр Чăваш Енринчен чылай нумайрах пулин те Хĕрлĕ кĕнекене кĕртнĕ. Пирĕн сахалрах – Хĕрлĕ кĕнекере мар.

**– Чăваш Енре йыш пĕчĕкреххине тилĕ, килсĕр йытă пĕтернипе кăна ăнлантармалла-ши?**

– Сунарçăсем, браконьерсем çуллен пăшалтан персе тытаççĕ. Суранланни йăвана кĕрсе вилет. Унтан кăларассишĕн çĕре чавса шăтăка çĕмĕреççĕ – çемье йăвасăр юлать.

**– Патăрьелтен мĕнле шухăшпа таврăнтăр?**

– Йăва таврашĕнчи курăка вăхăтра çулмалла. Сăвăрсене браконьерсенчен, сĕтĕрĕнчĕк йытăсенчен, тилĕсенчен хÿтĕлемелле.

■ **Юрий МИХАЙЛОВ**
**калаçнă**

*Тĕрĕслев*

## Йĕркене каллех пăхăнман

***Шупашкар районĕнчи «Юрма» агрохолдингăн Лапсарти кайăк-кĕшĕк фабрикинчен кăларса тăкакан чăх-чĕп каяшĕ Йăршшу юхан шывне лексе пин-пин пулă вилни çинчен «Хыпар» пĕлтернĕччĕ.***

Çакăн хыççăн обществăна явап тыттарас тĕлĕшпе административлă тата уголовлă ĕç пуçарчĕç, унтан пысăк штраф шыраса илчĕç. Предприяти специалисчĕсем пăхса тăманран иртнĕ кĕркунне тата кăçалхи çуркунне тислĕк пухмалли лаптăкран шĕвек каяш татах Йăршшăва юхнă.

Нумаях пулмасть фабрикăн çав вырăнĕнче ЧР Сунарçăсемпе пулăçсен патшалăх службин тĕрĕслевçисем пулнă, тислĕк пухмалли лаптăка тĕрĕсленĕ. Шĕвĕ каяша ун таврашне сапаласа тăкнине палăртнă. Вăл чĕр чун тĕнчин объекчĕ шутланакан тăпра сийне наркăмăшлантарать тесе пĕтĕмлетнĕ. Агрохолдинг тĕлĕшпе административлă тепĕр ĕç пуçарма йышăннă, предприятирен çут çанталăк çинчен калакан саккунра пăхнă çитменлĕхе пĕтерме ыйтнă.

## Атăла пÿлнĕшĕн

***Укçа нумай ĕçлесе илекенсем темиçе миллион тенкĕ тÿлесе Атăл хĕрринче çĕр илеççĕ, ун тавра карта тытаççĕ.***

Анчах пĕрисем унпа юхан шыв çыранне хупăрлама юраманнине пĕлмеççĕ, теприсем саккуна шута хумаççĕ. Сăмахран, «Куба» общество Атăлăн Муркаш районĕнчи çыранĕнчи хÿтĕлев талккăшне кĕрекен хысакне картапа пÿлнĕ. Çынсем кунтан шыв патне анаймаççĕ. Районсен хушшинчи çут çанталăка хÿтĕлекен прокурор предприяти директорĕнчен картана пăсма ыйтнă. Хальлĕхе штраф парса айăпламан.

## Ăçта насус?

***ЧР Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерстви хунав лартса вăрман çитĕнтерме, ăна касма, сутма Раççей вăрман фончĕн килĕшÿре палăртнă лаптăкне предпринимательсене тара парать.***

Тăвай районĕнче Ю.М.Борисова уйăрнă. Асăннă прокуратура вăл чăтлăх-вĕтлĕхре пушар хăрушсăрлăхне епле тивĕçтернине тишкернĕ. Унăн хуçалăхĕ – Элпуç ялĕнче. Хальлĕхе Борисов вăрманти путăк-шăтăклă çулпа çÿреме пултаракан автомашина та, 100 лаша вăйĕллĕ бульдозер та, пушар сÿнтермелли хатĕр те туянайман-ха. Анчах министерствăн 2012 çулхи утă уйăхĕнчи 347-мĕш хушăвне пурнăçласа вăрман лаптăкне тара илнисен хуçалăхне вут-çулăмпа кĕрешмелли хатĕр-хĕтĕрпе тивĕçтермеллех. РФ Административлă право йĕркине пăсни çинчен калакан кодексне пăхăнманшăн арендатора штраф тÿлеттерме йышăннă.

## Çунтарма юрамасть

***Килти хуçалăхра пуçтарăннă ăпăр-тапăра ял тăрăхĕн çĕрне – çырма-çатрана е кĕрленкĕ пуçне – йăтакан чылай.***

Унта – çĕтĕк-çатăк, çурăлман вут сыппи, пластмассăран тунă савăт-сапа, целлофан хутаç, çунакан е пысăк температурăпа ирĕлекен ытти материал. Çавнашкал ăптăр-каптăра совет тапхăрĕнче лăпкă çанталăкра вут чĕртсе çунтарса янă – ял-йыш вырăнти влаçран сăмах илтмен. Ял тăрăхĕсен администрацийĕсем йăлари хытă каяш çаврăнăшне йĕркелес тĕллевпе тивĕçлĕ документсем çирĕплетнĕренпе килти хуçалăхри кирлĕ мара ял тăрăхĕн çĕрне тăкма юрамасть. Ăна районăн каяш полигонне турттарма контейнера тултармалла. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Хурапха ялĕнче купана /39 тăваткал метр/ вут чĕртсе кĕллентерес тенĕ. Ара, çунтарса ярсан çынсене пухса тиеттермелле мар, бензин тăкакĕ те пулмасть. Анчах йĕрке ун пек тума чарать. Çут çанталăка сыхлакан прокурор Шĕнерпуç ял тăрăхĕн пуçлăхне купана полигона ăсатма хушнă.

■ **Федор СТЕПАНОВ**

*Сунар*

## Аталану – тара илекенсенче

***Чăваш Республикин «Чăваш Енри сунарçăсемпе пулăçсен пĕрлĕхĕ» общество организацийĕ 4500 çынна пĕрлештерет.***

Вĕсем 21 районăн тата 6 предприятин пуçламăш организацийĕнче шутра тăраççĕ. Шупашкарта, Çĕнĕ Шупашкарта, Улатăрта – чи пысăк уйрăм. Кашни 3 уйăхран пĕрлĕх канашĕн ларăвне иртеретпĕр. Организаци ĕç-хĕлĕпе çултталăкра пĕрре паллаштаратăп.

Пĕрлĕх 3 çул каялла республикăран сунар хуçалăхĕ йĕркелеме 20 лаптăк тара илчĕ. Нумаях пулмасть правлени – автомобиль, Пăрачкавсен организацийĕ «Буран» юр ашан туянчĕ. Сунар хуçалăхĕсенче вăй хуракансем /33-ĕн/ сунар объектне кĕрекен чĕр чун çухатусăр хĕл каçтăр тесе сивĕ уйăхсенче вăрмана тырă, утă кÿреççĕ, суланча, çăка милĕкĕ хурса параççĕ, браконьерсенчен сыхлаççĕ. Хуçалăха аталантарнăшăн Йĕпреçсен уйрăмне ырăпа палăртас килет. Ăна Владимир Оглоткин ертсе пырать. Ывăлĕ Сергей ашшĕн çулĕпе кайнă: ăста сунарçă.

Шел те, чĕр чуна тÿлевлĕ тыттарса укçа çителĕклĕ ĕçлесе илеймен пирки кашни организаци чи кирлине – автомашина – туянаймасть. Халĕ маларах асăннă 20 хуçалăхран 13-шĕ çеç пирĕн алăра. ЧР Арбитраж сучĕ иртнĕ икĕ çулта тара панă лаптăксене саккуна пăсса валеçнĕ тесе 7-шне пирĕнтен туртса илчĕ, хуçалăхсене салатрĕ, çынсене ĕççĕр хăварчĕ, хуçалăхсенче тунă çурт-йĕре пăрахма тиврĕ. Çакăн хыççăн чылай сунарçă пире нихăш енĕпе те пулăшмастăр тесе организацирен тухрĕ. Çавна пула укçа тÿлекен чакрĕ.

ЧР Сунарçăсемпе пулăçсен патшалăх служби çав лаптăксене тепĕр хут тара пама çывăх вăхăтра аукциона кăларать. Унта пĕрлĕх те хутшăнасшăн. Мускаври, ытти хулари хулăн кĕсьеллĕ бизнесменсем хаклашура тара илессишĕн укçа ытларах сĕнсе ку вырăнсене ярса илсе чи шултра чĕр чуна – пăшие, хир сыснине, ыттине – çеç ĕрчетме тытăнмĕç-ши? Вĕсене тытма республикăри сунарçăсене кĕртĕç-ши?

Пĕрлĕх кайăкçăсемпе пулăçсене пушă вăхăта сунарта е пулăра иртерме май туса парассишĕн тăрăшать. Çĕнĕ Шупашкар уйрăмĕн хастарĕсем Атăл леш енчи Акăшсен пĕчĕк кÿлли çумĕнче хăнасене çĕр каçма пÿрт, сунар хыççăн çăвăнса тасалма мунча, ĕç хатĕрĕсене хума сарай, йытă вити тунăччĕ. 2010 çулта вут-çулăмран пÿрте çеç хÿтĕлесе хăвартăмăр, ытти кĕлленчĕ.

Козин утравĕнчи /Атăл çинче, Çĕнĕ Шупашкартан аяларах/ кану çуртĕнче сунарçăсемпе пулăçсене çеç мар, туристсене те йышăнатпăр. Йĕпреç районĕнчи Калиновка вăрманĕн уçланкинчи хăна çуртĕнче пурне те хапăл. Халĕ Пушкăртстанран килнисем канаççĕ.

Пĕрлĕхе никĕсленĕренпе килес çул 95 çул çитет. Вăл яланах ахаль сунарçăпа пулăçа пĕрлештернĕ. Ÿлĕм те çапла пулĕ. 2011-2012 çулсенче Çĕрпÿ районĕнче, пĕлтĕр тата кăçал Элĕк тăрăхĕнче сунарçăсен биатлонне иртертĕмĕр. Кăçал Çĕнĕ Шупашкарта, Канашра хула шайĕнче, çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче Шупашкарта акар йыттисен республика куравне йĕркелерĕмĕр. Конкурса хутшăнма Чăваш Ен тулашĕнчен те йышлăн килчĕç. Хĕлле Сăр, Атăл çинче çуллен – пулăçсен ăмăртăвĕ.

Вăрман, шыв-шур, уй-хир чĕр чунне нумайрах ĕрчетсе сунарçăсене ытларах тытма май туса парас, енлĕкпе кăсăкланакансен çул çÿревне вăйлатас тесен сунар хуçалăхĕсене аталантармалла. Вĕсем тĕрлĕ чĕрлĕх ĕрчетĕç, хăнасене вăхăтлăха чарăнса тăма мĕн кирлине пурне те тăвĕç.

Кашни акарçă усă курма пултаракан сунар вырăнĕсенче чĕр чун йышне ÿстерме йывăр. Мĕншĕн тесен вĕсене ЧР Сунарçăсемпе пулăçсен районсенчи инспекторĕсем пăхса ĕлкĕреймеççĕ. Вĕсем территорин пĕр кĕтесне çул тытнине айккинчен сăнаса тăракан браконьерсем тепринче пăшие е хир сыснине персе пăрахаççĕ, хăйсен хыçĕнчен юн тумламĕ те хăвармаççĕ. Курнисем пулмасан вĕсене явап тыттараймастăн. Картран тухни аллине хурса хăвармасть. Тара панă лаптăксене егерьсем кунĕн-çĕрĕн сыхлаççĕ. Браконьерсем вĕсене хуралланине пĕлеççĕ.

Тĕллевлĕ ĕçлекен кашни сунар хуçалăхĕнче пăрулама, çăвăрлама, пăранлама, чĕп кăларма, йăхлăха çитĕнме май туса параççĕ. Çăткăн чĕр чунран вĕсене егерьсем хÿтĕлеççĕ. Республикăри кашни сунарçă ирĕккĕнех усă куракан лаптăкра çавнашкал вырăнсем çук. Вĕсене йĕркелесен те служба инспекторĕсем хăйсем тĕллĕн кăна çăткăн чĕр чунран хÿтĕлесе ĕлкĕреймеççĕ.

Пĕрлĕх 2013 çулта федерацин Атăлçи округĕнче мĕн пур енĕпе – 3-мĕш, уйрăммăн илсен кашкăр тытассипе ултăмĕш ушкăнра 3-мĕш вырăн йышăнчĕ.

■ **Федор ЖОГОЛЕВ,**
**Чăваш Енри сунарçăсемпе пулăçсен пĕрлĕхĕн председателĕ**

## Хăш ÿсен-тăран ытларах килĕшет?

***Кăçал Раççей Çут çанталăк ресурсĕсемпе экологи министерстви тата Тавралăха хÿтĕлеме пулăшакан «Çут çанталăк» фонд «Раççей аллейи» ятлă çĕр-шыва юратма йыхăракан акци иртерееççĕ.***

Унăн тĕллевĕ – Раççей пĕрлĕхне тĕреклетесси, регионсенче пурăнакансен пĕр-пĕрин хушшинчи çыхăнăвне çирĕплетесси, экологи культурине сарасси, тăван тавралăха упрама вĕрентесси.

Çĕртме уйăхĕнче акци пуçаруçисем хăйсене регионсен çут çанталăка хÿтĕлекен органĕсенчен федераци субъекчĕсенче пурăнакансем килĕштерекен 5 тĕрлĕ ÿсен-тăрана пĕлтерме ыйтнă. ЧР Çут çанталăк ресурсĕсемпе экологи министерстви йĕркеленĕ ĕç ушкăнĕ çынсен шухăшне пĕлес тĕллевпе сасăлав иртерме çаксене сĕннĕ: хăмла, юман, йăмра, çаврака çулçăллă çăка, шанман курăк /шур чечек/.

Республикăра пурăнакансем утă уйăхĕн 1-31-мĕшĕсенче Чăваш Ен сăн-питне кăтартакан йывăçа е курăка «Аллея России» акци сайтĕнче сасăласа палăртма пултараççĕ. Акци пуçаруçисем федерацин кашни субъекчĕ килĕштерекен ÿсен-тăранпа каярахпа экологин çут ĕçĕнче, çĕр-шыв ÿсен-тăранĕпе паллаштаракан сад-парк хывнă чух федерацин ĕç тăвакан органĕсем усă курасса шантараççĕ.

Акци пуçарăвне ырламалла çеç. Министерство сĕннĕ 5 ÿсен-тăранран хăшĕ чи нумай сасă пухĕ-ши? Ыйту хуравĕ кăсăклантарать. Республика гербне кĕртнĕ хăмлапа юманшăн-и е кашни ялта çитĕнекен йăмрашăн-и? Паллах, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче нумайăшне выçса вилесрен çăлнă серте те списока кĕме тивĕçлĕ.

■ **С.СЕРЕГИН**

**Кăларăма Юрий МИХАЙЛОВ хатĕрленĕ.**

